К С(Чув)
Г83
Ч-37250

Измаил
ГРИГОРЬЕВ-ИСЕМПЕК



# ВАНЮК ПИЧЧЕ МЫСКАРИСЕМ

*калавсем*

«Çилçунат» кĕнеки
Шупашкар, 1999 ç.

Национальная библиотека ЧР
4-037250

*Измаил ГРИГОРЬЕВ-ИСЕМПЕК 1945 çулхи кăрлачăн 5-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Чуллă ялĕнче çуралнă. Еншик-Чуллăри çичĕ çуллăх шкулĕнчен вĕренсе тухсан Шупашкарти электромеханика техникумĕнче пĕлӳ илнĕ. 1960 çулхи майăн 3-мĕшĕнче ĕçлеме пуçланă. Малтан стройкăра, кайран приборсем тăвакан заводра (ЗЭИП) комплектовщикре, аслă техник-технологра вăй хунă. 1964—1995 çулсенче çар хĕсметĕнче тăнă. Запасри полковник. Омскри аслă çар училищинче, Львовра çар журналисчĕсен факультетĕнче, Мускаври çар академийĕнче, И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ăс пухнă.*

*1978 çулта диссертаци хӳтĕленĕ. Истори наукисен кандидачĕ. Доцент.*

*Çарта — взвод, рота командирĕ, 1971—1978 çулсенче — Самарăри «Защитник Родины» хаçатра çар корреспонденчĕ, яваплă секретарь пулнă. 1978—1995 çулсенче аслă çар училищисенче малтан — преподавательте, кайран кафедра ертӳçинче тимленĕ.*

*Ачаранах сăвăсем, калавсем çырнă. Стена хаçачĕсем кăларнă, унта унăн тĕрленчĕкĕсем те тухнă.*

*Пысăк пичетре 1966 çултанпа тăрăшать. Пин ытла тĕрлĕ хайлав авторĕ. Вĕсем хамăр çĕршывра та, чикĕ леш енче те тĕрлĕ чĕлхепе пичетленнĕ. Журналистсен, писательсен союзĕсен членĕ.*

*Халĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ют çĕршыв журналистикин кафедрине ертсе пырать.*

4-37250
ПРОВЕРЕНО
2015 ОКТ 2017
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВ.
РЕСПУБЛИКИ
ЭКЗ.

Г83

# ШĂВĂÇ ВИТРЕ

**Хĕрĕхмĕш çулсен юлашки çулĕсем. Пурнăç йывăрччĕ. Çĕр улмипе çурмалла пĕçернĕ çăкăр, пăрçа пашалăвĕ, крахмал кĕселĕ патша апачĕ пекех туйăнатчĕç.**

**— Çăва тухсан сывлăш çавăрăпăр-ха, — хаш сывлатчĕ анне, кăвас чĕресĕ тĕпĕнчи чустана яшка валли çăмахлăх хунă май. — Унтан ĕне сума пуçлăпăр, сире валли сĕт пулĕ.**

**— Ах, ним те çук-çке ачасем валли, Матрунь аппа, — хурланатчĕ Иван мучи арăмĕ, кăвар илме пырсан. Вучах чĕртме шăрпăк та çук-çке-ха.**

**Кам та пулин кăмака хутса пӳртне ăшăтас тет, çавăн урама тухса кӳршĕсен мăрйинчен тĕтĕм туххине пăхма тиветчĕ, вара ун патне кăвар илме каятчĕç. Ача-пăчана кăвар патне ярсан, вĕсем тимлĕ пулманнипе çуртсем çунса кайни те пулкалатчĕ. Сăмахĕ хальхинче кăвар çинчен мар-ха. Ача-пăчан ун чухнехи йывăр пурнăçĕ çинчен.**

**Çу çитсен те ĕне сĕтне ачасене çитерместчĕç. Налук тӳлемеллеччĕ. Ĕне пуçне патшалăха икçĕр аллă литр сĕт памаллаччĕ. Сурăхсемшĕн брынза налукĕ тӳлемеллеччĕ. Чăвашсем сурăх суман. Уншăн вара ĕне сĕчĕ хушмаллаччĕ. Енчен те патшалăха сĕт параймасан, сар çу памаллаччĕ. Çирĕм пилĕк литр сĕт пĕр кило сар çупа саплашатчĕ. Сĕтне парса пырсан, пире нимĕн те лекместчĕ.**

**— Ах, Сăпалюк кинеми, тепĕр уйăхĕнче çу памалла пуль, — тетчĕ анне. — Ачасем хуть уйран çийĕç.**

**Анне каланă тăрăх пĕр кило сар çу тума вăтăрхĕрĕх литр сĕт кирлĕ. Вăл вара тупăшлă мар-мĕн. Ĕнисене те çырма-çатрара анчах çитерсе çӳретчĕç те, кĕтӳрен выçăпа ӳлесе-макăрса таврăнатчĕç.**

**— Мĕн çитермеле-ши апăршана? — тетчĕ вара анне, Краснушка çине пăхса. — Ăçтан çуллă сĕт патăр ĕнтĕ мĕскĕн чун.**

**Анне сĕт налукне сар çупа çырлахтарсан эпĕ**

К84.09(=Чув)6-Ф45

савӑнаттӑм. Мӗн каласси, ҫылӑха та кӗнӗ ӗнтӗ. Сӑмахӗ лаҫра ларакан шӑвӑҫ витре пирки-ха. Унта сӗт тултарса лартатчӗ анне. Пӑртакран вӑл йӳҫетчӗ. Хӑймине пуҫтарса илсе анне уйран уҫлатчӗ. Кайран услам ҫӑва шӑратса сар ҫу тӑватчӗ.

Сӗт витри лаҫра питӗрмесӗрех ларатчӗ. Тем чул сӗт ҫиес килсен те тӗкӗнме юрамастчӗ. Ҫупкӑ-тапкӑ лекме пултаратчӗ. Анчах хӗнесрен хӑраса мар, йывӑр пурнӑҫа ӑнланса тӗкӗнместӗмӗр витрери сӗте.

Ҫапах пурте чӑтма пултараймастчӗҫ ҫав. Кӳршӗ ялри Санюка амӑшӗ услам ҫу вӑрттӑн ҫинӗшӗн нуша та кӑтартнӑ-мӗн. Уйран уҫланӑ хыҫҫӑн амӑшӗ услам ҫӑва супӑнь шывӗпе сиктернӗ те чӑлана лартнӑ. Санюк шкултан таврӑнсан хайхи ҫупа апатланнӑ. Кӑштахран варвиттие кайнӑ, хӑсма тытӑннӑ. Ҫавӑнтанпа Санюк услам ҫу ҫине пӑхма та пултарайман тет.

Куншӑн Санюк амӑшне ял ҫыннисем сивлетчӗҫ.

Тата акӑ мӗн: пирӗн пата юнашар ялтан асанне час-час хӑнана килетчӗ. Вӑл хӑйӗн ача чухнехи йывӑр пурнӑҫӗ ҫинчен каласа паратчӗ.

— Эпир ҫемьере вунӑ хӗр те пӗр ывӑл ӳснӗ. Ҫимелли яланах ҫитместчӗ. Атте е питӗ хытӑ пулнӑран, е апат-ҫимӗҫ ҫитменрен сӗлӗрен кӗсел туса ҫеҫ ҫитеретчӗ. Кӗселӗ питӗ йӳҫӗччӗ. Ӑна вара, кантӑр вӑррине ватса, шывпа пӑтратса, сӗт пек шурӑрах шӗвекпе сыпса ҫиеттӗмӗр, — тетчӗ.

Асанне мана, хӗрхенсе, чееленме вӗрентрӗ. Челӗхӗ акӑ мӗнре пулчӗ.

Аслӑк тӑрринче сӑра кункӑри валли ятарласа ҫапнӑ ыраш кӗлтисем упранатчӗҫ. Унтан вӑрӑм улӑм пӗрчи кӑларса илеттӗм те, ҫавӑнпа сӗт витринчен, хальхи ачасем коктейль ӗҫнӗ пек, сӑрӑхтарса ӗҫеттӗм. Хӑймаланнӑ сӗт витринче питех паллӑ йӗр юлмастчӗ. Ҫапах витрери сӗт, пӗр сантиметр таранах йӗр хӑварса, анса ларатчӗ. Ӑна пытарма та асаннех вӗрентрӗ.

— Эсӗ витре тавра шывпа йӗпетсе тух, кайран нӳрленнӗ ҫӗре пӗр-ик ҫӑвар сӗтпе пӗрӗхтер, — тетчӗ.

Чеелĕхе никама та пĕлтерме хушманччĕ.

Пĕррехинче аттепе анне лаçра калаçса тăнине илтрĕм.

— Çав Анаткасри Йăван ватăлчĕ пулмалла, — тет анне. — Виçĕ шăвăç витре çине-çинех тутартăм, пурте юхаççĕ.

— Эх, çылăха кĕртрĕм пулмалла çав ыра çынна, — хурланатăп халĕ те. — Уншăн Тура касартăрах ĕнтĕ мана...

## АВТАН ТУКМАКĔ

Каçхине анне пирĕнпе, ачи-пăчипе ĕнтĕ, çар советĕнчи пекех канашлу ирттерчĕ. Сăлтавĕ — автан. Юлашки вăхăтра вăл — килти чăхсен командирĕ — «ылтăн тумлă», пысăк хĕрлĕ киккириклĕскер, пăсăлса кайрĕ. Темшĕн ачасене курайми пулчĕ. Пирĕн умран иртсе каякан шĕвĕрсене курать те тӳрех хăвалама пуçлать. Хăваласа çитсен, хулпуççи çине хăпарса ларса, шăв-шав çĕклесе, пуçран таккама тытăнать.

— Якку арăмĕпе Ванькка мучи арăмĕ мана автаншăн улăхра, пĕтĕм халăх умĕнче намăслантарчĕç, — терĕ анне. — Ватăлса та кайрĕ пулмалла. Кӳршĕри автансене те канлĕх памасть. Сăпани кинемисен автанĕ хăрах куçсăр çӳрет. Павăл Михалч арăмĕн автанĕн киккирикне çурса янă. Пусма лекет ку автана, — приговор турĕ анне. — Тата шăматкун аçу Шупашкартан килмелле, кĕтӳçе апатлантармалли кун та çитет, хамăр та тахçанах шӳрпе çимен.

Асли пулнă май автана пусма анне мана хушрĕ.

Тепĕр кунне ирех мана выртăн çинчен тăратрĕ те картише илсе тухрĕ. Çатăлтатакан автана вутă çурмалли каска çине хучĕ те пĕр алла унăн çивĕч чĕрнеллĕ урисене, тепĕр алла пуртă тыттарчĕ. Хăй пӳртум хыçне пытанчĕ.

— Тат хăвăртрах пуçне, — терĕ.

Автан лăпкă выртмасть-çке. Пурнăçĕ пĕтсе пынине чухларĕ пулмалла та кăшкăрма, тапкаланма пуçларĕ. Ал тунине чĕрнисемпе чĕрсе пĕтерчĕ, унтан юн сăрхăнать.

Пӳрт хыçĕнчен каллех анне сасси илтĕнет:

— Хăвăртрах, мĕн кĕтсе тăран!

Майлаштара-майлаштара, пуртта автан мăйĕ çине шаплаттартăм пĕрре. Те вăйăм сахал пулнипе, те пуртти питĕ йывăр пулнипе автан мăйĕ татăлмарĕ. Юн пĕрхĕнме пуçларĕ. Шкула каймалли кĕпе автан юнĕпе вараланса пĕтрĕ.

Анне пӳртум хыçĕнче кăшкăрать те кăшкăрать:

— Мĕнле арçын эсĕ, çавна та пусаймастăн! — тет.

Каллех тискеррĕн талпăçакан автан мăйне тепĕр хут пуртăпа шаплаттартăм. Каллех пуçĕ татăлса ӳкмерĕ. Каллех анне çухрашать, автанĕ кăшкăрать. Эпĕ çине-çине автан мăйне пуртăпа лачлаттаратăп, анчах автан мăйĕ пурпĕр татăлмасть.

Унччен те пулмарĕ, анне пӳртум хыçĕнчен сиксе тухрĕ те, ман алран пуртта туртса илсе, автан мăйне çатлаттарчĕ. Киккириклĕ пуç каска çинчен çĕре персе анчĕ. Те хам хытă хумханнипе, те автан талпăçăннипе унăн урисем ман алăран вĕçерĕнчĕç те, ай-тур-тур, пуçсăр автан каска çинчен вĕçсе анса тарма пикенчĕ. Анчах пĕр-икĕ утăм турĕ те мăкăльт йăванса кайрĕ.

Каçхине атте килнĕ çĕре анне автан яшки пĕçерчĕ. Мана та автан тукмаккинчен уйăрса илнĕ пĕр пĕчĕк татăк какай лекрĕ.

## ПУЛĂШУ

Çуллахи кану вăхăтĕнче эпир, шкул ачисем, колхозра тăрăшса ĕçлеттĕмĕр. Пурнăçĕ çавăн пекчĕ. Ĕç кунĕсем тумаллаччĕ. Вара вĕсемшĕн кĕркунне тырă, çĕрулми, кишĕр, купăста валеçсе паратчĕç.

Çавӑнпа ӑмӑртса ӗçлеттӗмӗр тантӑшсемпе. Пӗр çулхине каникул маншӑн мыскарапа асра юлчӗ.

Утӑ уйӑхӗн пуçламӑшӗ. Ёне ферминчен ушкӑнпа тислӗк кӑларатпӑр. Çав вӑхӑтрах килти тислӗке колхоза паракансем те пур. Бригадир çав «тупрана» тиесе тухма кашни кил пуçне пӗрер çитӗннӗ çын уйӑрчӗ. Эпӗ Çемен мучисем патӗнче ӗçлекенсен ушкӑнне лекрӗм. Мана миçе лав турттарнине шутлама хушрӗç.

— Ачи маттур, хастар, ӳссен, тен, колхоз бухгалтерӗ пулӗ, — лӗх-лӗх кулчӗ шӳтлеме юратакан Сӑпани кинемей, — халӗ лав шутласа пӑхтӑр. Хӑйех вӗсене шак чулӗпе епле шута илмеллине те вӗрентрӗ. Картиш варринче, хур-чӑх шыв ӗçекен чашӑк патӗнче выртаççӗ-мӗн чулӗсем.

— Лав хапхаран тухмассерен, ак çак чашӑка пӗр шак чулӗ пӑрах, — терӗ Сӑпани кинемей.

Питӗ килӗшрӗ мана кунашкал шут ӗçӗ. Çынсемпе пӗрле эпӗ те, кӗреçепе те, сенӗкпе те тар тухичченех лав хыççӑн лав тиерӗм. Вӗсем картаран тухмассерен каска çине лартнӑ чашӑка пӗрер шак чулӗ пӑрахрӑм.

Çемен мучисем патӗнчен тислӗк самай турттарчӗç. Эпӗ хама шаннӑ ӗçе — шутлассине — лайӑх туса пытӑм терӗм. Кӑнтӑр апачӗ хыççӑн манӑн пӗр шухӑш çуралчӗ. Çемен мучипе кинемей ватӑ çынсем-çке, колхоза тухаймаççӗ. Анчах вӗсен те ӗç кунӗн минимумӗ пур. Çавӑнпа те Çемен мучи минимум тултарас шутпа килти тислӗкне колхоза парать.

Манӑн ватӑ çынсене пулӑшас шухӑш çуралчӗ. Майне шутласа тупрӑмах. Лав тухнӑ хыççӑн чашӑка пӗрер чул мар, иккӗ пӑрахас терӗм. Никам та асӑрхамӗ. Уншӑн Çемен мучие ӗç кунӗ нумайрах парӗç.

Шутланӑ — тунӑ. Пилӗк шак чулӗ ытлашши пулчӗ чашӑкра. Ултава, чӑнах та, никам та асӑрхамарӗ. Эпӗ шикленме те пӑрахрӑм. Тислӗк тиесе пӗтерсен, Сӑпани кинеми мана чул катӑкӗсене шутлама хушрӗ.

— Çирĕм икĕ лав, — часах пĕлтертĕм эпĕ.

— Маттур, — ырларĕ мана Сăпани кинеми. Унтан кĕсйинчен çурмалла хуçлатнă тетрадьне кăларчĕ те лавсен хисепне унта çырса хучĕ.

— Каларăм вĕт никам та ултава асăрхамĕ тесе, — хам ăшăмра кулса илтĕм эпĕ.

Анчах манăн ултав часах çиеле тухрĕ.

Çемен мучи лавсен шутне хăй картса пынă иккен. Вăл ытлашши лавсене йышăнмарĕ.

— Пĕтĕмпе вунçичĕ лав пулчĕ, — пĕлтерчĕ ĕçлекенсене.

Пурте ман çине тĕлĕнсе пăхрĕç. Питçăмарти пĕçерсе кайнине туйса илтĕм.

— Эпĕ... эпĕ... Çемен мучие пулăшас терĕм, —



хуравларăм тӳрре тухас тесе. Куççуль те юхса анчĕ. Намăс-çке-ха.

— Пулăшас терĕн апла, анчах кун пек пулăшупа мана, шур сухала, намăс кăтартаттăнччĕ, ачамккă, — терĕ Çемен мучи. — Шкул ачисем ватăсене кун пек пулăшмаççĕ. Эсĕ тимурçăсем çинчен нимĕн те пĕлместĕн курăнать. Тăхта-ха, — тесе вăл пӳрте кĕрсе кайрĕ. Эпĕ ун хыççăн шиклĕн пăхса юлтăм. Вăрçăран илсе килнĕ сарлака чĕн пиçиххийĕпе тухса лектермĕ-ши ку мана текен шухăш вĕлтлетсе илчĕ пуçăмра. Часах ватă çын пӳртрен кĕнекепе тухрĕ.

— Ме, тыт, вула çак кĕнекене, «тимурçă», ватăсене пулăшас тесен, — ман еннелле тăсрĕ Çемен мучи хĕрлĕ хуплашкаллă кĕнекене.

«Аркадий Гайдар. Тимурпа унăн команди», — вуларăм эпĕ кĕнеке хуплашкинче çырнине...

Айăпа тепĕр эрнерен тӳрлетрĕмех вара. Хамăн тантăшсемпе. Çӳхе хăмаран тимурçăсен çăлтăрне касса кăлартăмăр, унтан Çемен мучисен хапхи çине çапса хутăмăр. Шкула кайиччен те, тавраннă хыççăн та вутă татса-çурса, çырмари çăлран шыв кӳрсе параттăмăр. Уроксем хыççăн киле тавраннсан каллех шыв кӳрсе пыма тытăнтăмăр. Хуçалăхри ытти ĕçсенчен те пăрăнмарăмăр.

Çапла эпĕ те, юлташăмсем те чăн-чăн тимурçăсем пулса тăтăмăр.

...Унтанпа хĕрĕх çул иртрĕ ĕнтĕ. Пирĕн çăлтăр Çемен мучи хапхи çинче паян кун та çакăнса тăрать. Анчах, хăми кушăрхаса çуркаланнă пулсан та, çав çăлтăр ятлă-сумлă мучи шкул ачине ятламасăр ăс панине аса илтерет.

## АТТЕ УРОКĔ

Аллăмĕш çулсен пуçламăшĕ. Эпĕ ун чухне пиллĕкри-улттăри ача кăначчĕ. Аттепе анне ир пуçла-

са каçчен колхоз хирĕнче тар юхтаратчĕç. Эпир те килте алла усса лармастăмăр. Ĕçĕ килте тупăнатчĕ ача-пăча валли те. Çырмаран шыв йăтмаллаччĕ. Малтан лаçри хурана, вуникĕ витре кĕрекенскерне, выльăх-чĕрлĕх валли апат пĕçерме, унтан пахчара ларакан икĕ витре кĕрекен хурана. Шывĕ хĕвелпе ăшăнса ларатчĕ те, унпа аттепе анне ĕçрен килсен çăвăнатчĕç. Кунсăр пуçне пахчари хăяр, купăста, кишĕр йăранĕсене шăвармаллаччĕ. Каллех шыв çĕклемĕ хыççăн çĕклем йăтмалла. Çав вăхăтрах сысна апачĕ пĕçерме çырмаран вĕлтĕрен вырса килмеллеччĕ. Вĕлтĕренĕ алăсене пĕçертессрен алсишпа ĕçлеттĕмĕр. Мĕн калас, мечĕкле выляма та вăхăт çукчĕ.

Çурла уйăхĕ çитсен вара атте мана кишĕр йăранĕ патне илсе пыратчĕ те, лайăх ĕçленĕшĕн ырласа, техĕмлĕ çимĕçе кăкласа паратчĕ. Мĕнле тутлăччĕ çав кишĕр! Халĕ те çăварта çав сĕткен.

Пĕррехинче атте хушăвĕсене тăрăшса, тĕплĕн туса пĕтернĕ хыççăн эпĕ хама хам парне тăвас терĕм. Ĕçсене пурнăçланă вĕт-ха. Кишĕр çиме те юрать. Пуçларăм чипер ӳсекенскерсене тăпăлтарма. Пĕрре çăлса пăхатăп, тепре — вĕтĕ. Шултрараххисене суйласа илетĕп те пĕчĕкреххисене персе чикетĕп. Çапла йăрана йăлтах çумласа тухрăм.

Аттепе анне ĕçрен килчĕç. Атте хушса хăварнă ĕçсене тунипе туманнине тĕрĕслерĕ.

— Маттур, — ырларĕ вăл мана.

— Атя, кишĕр кăларса парам сана.

Утрăм атте хыççăн. Çитрĕмĕр йăран патне.

Ак хайхи, пĕтĕм йăран имшерсе кайнă, кишĕр çулçисем çĕр çумне лăпчăннă.

— Ку санăн ĕçӳ-и? — ман çинелле шăтарас пек пăхрĕ атте.

Пире суйма вĕрентмен те, эпĕ тĕрĕссинех калама шутларăм.

— Виçĕ кишĕр кăларса çирĕм... — терĕм.

Атте мана кăшкăрса та тăкмарĕ, çупса та ямарĕ. Шанса кайнă кишĕрсене пĕр çĕклем пуçтарчĕ те

хăй хыççăн утма хушрĕ. Кĕç урама тухрăмăр.

— Лар çакăнта, — хушрĕ вăл, хапха умĕнче выртакан пĕрене çине кăтартса.

Лартăм. Манăн чĕркуççи çине кишĕр çĕклемне пăрахрĕ те: «Çи! — терĕ. — Пурте курччăр эс мĕн туса хунине».

Лартăм вара хапха умĕнче кишĕр кăшласа тĕттĕм пуличченех. Унтанпа пурнăçра нихăçан та çавнашкал намăс курман эпĕ.

## ЙĔКЕХӲРЕ НАРКĂМĂШĔ

Çулла. Пĕррехинче ирхине темĕнле сасă илтнипе вăранса кайрăм. Эпĕ ун чухне çенĕкре çывăраттăм. Пирĕн кил умĕнче кĕтӳ пуçтаратчĕç, выльăхчĕрлĕх хăвалама хĕрарăмсем пыратчĕç. «Виç хĕрарăм пĕр пасар», — тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. Пĕтĕм хыпара сӳтсе явмасăр вĕсем нихăçан пĕр-пĕринпе уйрăлмастчĕç. Паян шăв-шавне Пăлаки аппа пуçларĕ.

— Ачăрсене калăр, кишĕр йăранне эпĕ йĕкехӳрене вĕлерекен эмел сапрăм. Кашни çул кишĕрсĕр юлса манăн хал пĕтрĕ...

— Пăлаки аппа, санăн Кольу ӳссе çитиччен эпир те пĕр кишĕрсĕр тăрса юлаттăмăр. Халь ывăлу ӳссе çитрĕ те ĕнтĕ, пирĕн ачасене йĕкехӳре эмелĕпе нуша кăтартасшăн, — кăшкăрашрĕ Антун арăмĕ, Сăпани кинеми.

— Эпĕ сире пĕлтертĕм, урăх ман ĕç çук, — терĕ Пăлаки аппа.

Кĕçех çенĕке анне кăштăртатса та çитрĕ. Эпĕ куçа хупрăм та çывăранçи туса выртатăп хайхи.

Анне мана кăшт тĕртсе илчĕ те, эпĕ «вăрантăм».

— Пăлаки аппа пахчине ан кĕнĕ пултăр. Вăл кишĕр йăранĕсене йĕкехӳре эмелĕ сапнă. Вилсе выртсан, çапса пăрахап, — терĕ те анне улăха ĕçе тухса кайрĕ.

Ялта аслисем ёçе кайсан эпир çеç, вĕт-шакăр шăпăрлансем, юлаттăмăр.

Нумай та вăхăт иртмерĕ — ялта юлнă ачасем çырма хĕрне пуçтарăнтăмăр. Пăлаки аппан пахчи çырма хĕрринчеччĕ. Унта кĕме питĕ меллĕччĕ. Аякран пăхсан пахчана кĕнине никам та курмастчĕ. Часах пурте кишĕр йăранĕ çине çитсе тăтăмăр. Чăнах та ани темле шуранкăллă тĕспе витĕннĕ. Кишĕрсем питĕ пулса çитнĕ. Мĕн тăвăн... пуçсене усса çырманалла утрăмăр...

Пĕр эрне иртрĕ-и — пире Пăлаки аппан кўршĕ ачи Вова савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕ.

— Нимĕнле йĕкехўре эмелĕ те сапман кишĕре. Ăна кĕлпе анчах вĕçтернĕ. Хам куçпа хам куртăм. Ĕнерхи çумăр хыççăн паян ирхине Пăлаки аппа кĕлне ала витĕр кишĕр йăранĕ çине сапрĕ.

Эпир çапах та иккĕлентĕмĕр. Вилес килмест. Пурпĕр Пăлаки аппа пахчине çитрĕмĕр. Вова вара, пире ĕнентерес тесе йăранранах ик-виç кишĕр кăларса, вĕсене шăлаварĕ çумне сăтăркаланă хыççăн шатăртаттарса çиме пуçларĕ. Эпир хăрарăмăрха. Пĕр-ик сехет Вовăна сăнарăмăр. Вăл пур, качака путекки пек чип-чипер сиккелесе çўрерĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ — ял ачисен ушкăнĕ Пăлаки аппа пахчине хашлатса та çитрĕ. Вĕсем тўрех йăрана тапăнчĕç. Виç-тăвата çеккунтран йăранра пĕр кишĕр те юлмарĕ. Пĕр хушă ачасем урам тăрăх кишĕр шатăртаттарса çўрени анчах илтĕнчĕ.

Каçхине ял çыннисем ĕçрен таврăнчĕç. Часах ял варринче Пăлаки аппан сасси янраса кайрĕ.

— Çĕр çăтманскерсем, каллех кишĕрсĕр хăварчĕç. Ах, шуйттан çурисем...

Пăлаки аппа сассине илтсенех, эпĕ лупас тăррине йăпăр-япăр хăпарса техĕмлĕ утă çине çывăрма выртрăм. Ыйхă хăй ытамне иличченех пĕр шухăш пуçран тухмарĕ хамăн: «Атте-анне пĕлсен мĕн тейĕç-ши ĕнтĕ ыран мана!»

## *ВАНЮК ПИЧЧЕ МЫСКАРИСЕМ*

*Ванюк пиччене пĕлмен çын сахалччĕ Трак тăрăхĕнчи ялсенче. Шӳтлеме, япшар калаçма ăстаччĕ вăл. Спектакльсенче мĕн чухлĕ выляман пуль тата! Вар хытиччен култарма та, куççуль тухиччен хурлантарма та пултаратчĕ. Юрлас тĕлĕшпе те, купăс калас енĕпе те маттурччĕ. Туйран туя кăна çӳретчĕ халăх кăмăлне çĕклесе. «Нарспи» поэмăна пуçласа мĕн вĕçне çитиччен пăхмасăр каласа пама пултаратчĕ. Мыскарасем те час-часах кăтартатчĕ. Çав мыскарасемпе вулакансене паллаштарни пăсмĕ тетĕп.*

## ПЫЛЛĂ ÇĂКĂР

Пĕр çулхине Ванюк пичче юлташĕсемпе пĕрле Трак ярмăрккине пырса çитет. Кунта темĕн те пурмĕн: тутлă шывсем, премĕксем, канфетсемпе клентĕрсем, çăка пылĕсемпе чечек пылĕсем.

Ярмăрккă тăрăх çӳресен-çӳресен, çамрăксен хырăмĕ хыр тăррине хăпарса тарать. Мĕн тумалла? Çиес килет-çке. Анчах пĕрин те укçа çук. Юлташĕсенчен пĕри, çул çине тесе, çăкăр сăмси илсе тухнămĕн. Çавна пĕлсен, Ванюк пичче сасартăк хавхаланса каять.

— Çиччас пыллă çăкăр çитеретĕп сире, — тесе вăл, çăкăр сăмсине илсе, пыл сутакан ватăсем патнелле вĕçтерчĕ тет.

— Çур кĕренке виçсе парăр-ха, тархасшăн, — ыйтать пĕр шурсухалĕнчен хайхи Ванюк пичче.

— Ăçта ярса памалла-ха сана, ачамккă, — ыйтать савăнса кайнă ватă сутуçă.

— Ак çакăнта ярăр, — тет Ванюк пичче, — ăшне кăларса илнĕ çăкăр сăмсине кăтартса.

Старик виçсе ярса парать шĕвĕ пыла çăкăртан тунă «савăта». Ванюк пичче «савăтне» тыттарать те юлташне, укçа ширанă пек туса, пиншакĕн кĕсйисене ухтарма тытăнать. Унта чикет, кунта чикет

аллине, пушă кĕсйисенче укçи çук та çук.

— Каçар, тăванăм, — ÿкĕннĕн пĕлтерет Ванюк пичче кĕреçе сухала, — енчĕке киле манса хăварнă, мур илесшĕ. Илĕр каялла пылăра...

Ванюк пичче çăкăр сăмсинчи шĕвĕ пыла каялла ярса парать те аяккалла пăрăнать. Ярмăрккăран киле кайма тухсан, пылланнă çăкăр сăмсине юлташĕсене валеççе, «сывлăха пултăр!» — тесе, хăйне тивĕçнĕ татăкне чăмла-чăмла килелле таплаттарать.

## ТАВĂРУ

Ванюк пичче Шупашкарти пĕр института вĕренме кĕнĕ. Общежитири пÿлĕмре аслă курсра вĕренекенсемпе пĕрле пурăнать. Аслисем унăн чейĕ çине пĕрмай хĕрлĕ пăрăç е тăвар яраççĕ.



Çывăрса кайсан питне-куçне хăрăмпа сăрлаççĕ. Çавнашкал «шӳтсене» тӳсе-тӳсех пĕрремĕш курс пĕтерет Ванюк пичче.

— Ну, Ванюк, шăллăмăр, эсĕ ĕнтĕ халĕ чăн-чăн студент, — саламлаççĕ ăна аслисем. — Каçар пире, тархасшăн, санран шӳтленĕшĕн-кулнăшăн, урăх кулмăпăр, эсĕ «йывăрлăхсене» лайăх тӳссе ирттертĕн.

— Юрать, — хуравлать Ванюк пичче, — эсир те мана каçарăр, тăванăмăрсем. Паянтан пуçласа эпĕ те сирĕн чейнике чĕç тума пăрахатăп, — лĕх-лĕх кулать Ванюк пичче.

## ÇЫРУ

Куçне шур илме пуçланă Евлен аппа, аллăмĕш çулхи авăн уйăхĕнче, Алюш ывăлĕнчен çыру илет. Питĕ инçетре унăн вуниккĕмĕш пепки — Омск хулинче. Ялхуçалăх институтĕнче вĕренет вăл унта. Хăйпе пĕрле салтакра хĕсметре тăнă юлташĕ чĕннипе кайнă тет-и...

— Мĕнле пурăнать-ши, апăрша, апачĕ-çимĕçĕ çиткелесе пырать-ши? Унта, çĕн çĕрте, уйĕсем питĕ пысăк теççĕ те, тырри-пулли ăнкаларĕ-ши кăçал, çăкри-тăварĕ тивĕçет-ши, хуть, — сасăпах шухăшлать ватăлма пуçланă амăшĕ, кӳршĕри хĕрачи Раис шкултан таврăнасса чӳречерен сăнаса.

Сыхласан-сыхласан, шур пир сумккă çакса янă вăрăм пӳ-силлĕ хĕрача чӳречерен курăнах каять.

— Раис, кĕр-ха, кĕр пирĕн пата. Алюш çыру янă, вуласа пар-ха, хĕрĕм, — йăлăнать чиперука, тем вăхăтра хапха умне чупса тухнă Евлен аппа.

Çын куçĕнчен пăхмĕччĕ те çав, мĕн тăвас тен, хут пĕлменни пĕтерет Евлен аппана. Ача чухне, патша вăхăтĕнче, вĕренме май пулман. Хĕрачасене вĕрентмен çав ун чух. Кайран, хĕрĕх пиллĕке çитсен кăна, хурал пӳртĕнче аслисем валли шкул

уҫнӑччӗ. «Ликбез» тетчӗҫ. Шкулӗнче вара, учительсем ҫитменнипе, кӳршӗ ял ачи Раман, хӑй тӑваттӑмӗш класа ҫеҫ ҫӳрекенскер, саспаллисем ҫырма тата вулама вӗрентнӗччӗ. Ҫамрӑкла вӗреннине мӗн ҫитӗ ӗнтӗ! Хутла вӗренес шут пулман та ун чухне. Килӗнче те, уйӗнче те ӗҫ мӑй таран, ачи-пӑчи сак тулли. Ҫапах та Евлен аппа хут ҫинче хӑй ятне-шывне палӑртма пӗлетчӗ-ха. Вулассипе вара букварьтен иртейместчӗ. Ҫавӑнпа килтен тухса кайнӑ ачисем амӑшӗ патне саспаллисене кӗнекери пек пичетлесе ҫыратчӗҫ. Халӗ, куҫ ҫути тарнӑ май, пичетленӗ ҫырусене те вулаймасть Евлен аппа. Букварьне те арча тӗпнех чӗркесе хунӑ.

Пӳрте кӗрсенех Евлен аппа ывӑлӗн ҫырӑвне Раиса тыттарчӗ. Лешӗ конверта вӑрт-варт уҫрӗ те васкаса, пӗр чарӑнмасӑр, сассине улӑштармасӑр вулама пуҫларӗ.

Чуна уҫмасӑр вуланӑ ҫыру Евлен аппана савӑнтарас вырӑнне пӑлхантарса ярать.

— Пӑх-ха эсӗ ӑна, стипенди укҫи пит сахал тет тата, — тарӑхса кайрӗ амӑшӗ. — Пирӗн укҫи ӑҫтан тупӑнать-ши! Чӑх ҫӑмарти сутнипе нумай укҫа тӑваймӑн. Тата налукӗ мӗн чухлӗ! Ну, пӳтсӗр, нимӗн те шутлама пӗлмест иккен. Мӗнле сӑпайлӑччӗ килте чух, пӑсӑла пуҫларӗ курӑнать хулара.

Ҫав кун Ванюк пичче, тем ӗҫпе Тракра пулнӑскер, ҫула май Евлен пысӑкамӑшӗ патне шыв ӗҫме тесе кӗрет. Сӑмах ваклама юратакан Алюша аса илет, ун ҫинчен ыйтса пӗлет. Пысӑкамӑшӗ, Ванюк ҫепӗҫлӗхӗпе ҫӗнӗрен хавхаланса ӳкнӗскер, Омскран килнӗ ҫырӑва кӑтартать. Тепӗр хут вуласа пама ыйтать.

Ҫепӗҫҫӗн, васкамасӑр, чарӑна-чарӑна, вулать Ванюк. Шупашкарти артист тейӗн ҫав.

— Стипенди укҫи питӗ сахал, — макӑрса ярас пек хурлӑхлӑ сасӑпа вулать малалла Алюш ҫырӑвне. Евлен аппана хайхи ҫак самантра хӑй умӗнче Ванюк мар, Алюш тӑнӑн туйӑнать. Кӑмӑлӗ те уҫӑлса каять амӑшӗн. Ара, ҫырури сӑмахӗсем чӗре патнех ҫитеҫҫӗ-ҫке.

— Мĕн тери аякра пулин те амăш чĕлхине ман-ман-ха, — шухăшлать Евлен аппа, — чăвашлах çырать. Укçи-тенки те питĕ хĕсĕк ĕнтĕ, мĕн тăвăн. Çав тери нуша курса вĕренме лекрĕ шеремет ачин, — амăшĕн асĕнчен тухмасть ывăлĕ. — Пирĕн кун-та хуть çĕрулми пур, çенĕкре йӳçĕтнĕ купăста кат-кипех ларать, çăкăрне те хамăрах пĕçеретпĕр. Уйранĕпе кăмака улми те алă айĕнчех. Хулара вара кашни çăкăр татăкне, çĕрулмине укçа парса ил-мелле. Ăçтан çиттĕр ĕнтĕ укçи, чăнах та...

— Иртнĕ пасарта аллă тенкĕллĕх çăмарта сутнăччĕ, çавна та пулсан ярса парас-ха ку ачана, — чечеклĕ тутăр вĕçĕпе куçне шăлкалать Алюш амăшĕ Ванюкпа сывпуллашса.

## ПУЛĂ ШӲРПИ

Вăрçă хыççăнхи пĕр çул утă уйăхĕнче хĕвеллĕ ирпе Ванюк пичче Михала куккăшĕ патне кӳршĕ ялтан лашапа пырать.

— Михала кукка, санăн тырă авăртмалла мар-и, айта пĕрле манпа армана, — йыхăрать ăна Хуса-кассине кайма тухнă лавçă.

— Çăнăх пĕтсе пырать те-ха, анчах паян армана каияс çук пулĕ, каçхине Алманча çитсе ӳкмелле, ыран çăл пури тума пуçламалла, — хуравлать Ванюк пиччене куккăшĕ.

— Каçчен çаврăнса çитетпĕр, ан кулян, — тавă-рать Ванюк пичче.

— Не-най, авăртăпăр-ши паян, арманта халăх ну-май терĕç те, — ӳкĕте кĕртеймест ăна Михала.

— Каланă сана, авăртса килетпĕрех тесе, эпĕ, кур, вăлтасем илтĕм, Çавал лăпкă пулмалла паян, партассем те тытса килĕпĕр, — Михала куккăшĕ пулă тытма юратнине шута илсе юптарать Ванюк пичче.

Ӳкĕтлесен-ӳкĕтлесен, Михала куккăшĕ икĕ михĕ ыраш хурать те лав çине, ларса каять.

Ч-37250



НАЦИОНАЛЬН... ...ТЕКА
ЧУВА...

Арман чулĕ витĕр тухмасăр, çăкăр çăвара кĕмест, — каланă авалхи чăвашсем. Анчах вăл вăхăтра арман авăртасси çăмăл ĕç пулман. Таврара çил арманĕсем пулнă, анчах вĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме пултарайман çил çуккипе, шыв арманĕ вара талăкĕпех хуллен-хуллен халтăртатса ларнă. Черет майĕпен шăваннă, çынсем çăнăхлă пулнă. Хусакасси ялĕ, Шетмĕ Çавала юхса тухнă тĕлте вырнаçнăскер, шыв арманне Шетьмĕ шывĕ çине лартнă. Анчах пĕви пĕчĕк пулнипе шывĕ арман чулне сиккипе çавăрттарайман. Çăнăхлă пулас текенсен черетре нумай ларма тивнĕ. Хăш-хăш чух черетре эрне пурăнни те пулнă арман пӳртĕнче. Черетсĕр авăртма май килмен. Халăх черет тилхепине алра тытса тăнă. Черет йышăнса, тыррине авăртма мельнике шанса хăварсан та мельникĕ ун çинчен часах манса та кайнă. Çавăнпа та чăваш халăхĕн «Армана арманçă кутĕнче ларса авăртаççĕ» текен сăмахлăх çуралнă пулмалла.

Çитеççĕ хайхи Ванюк пиччепе Михала куккăшĕ армана. Унта черет. Черетре виçĕ хĕрарăм. Виççĕшĕ те вутлансем.

— Каларăм вĕт сана, халăх нумай пулать тесе, — ӳпкелеме пуçлать Ванюк пиччене Михала куккăшĕ. — Кун пек пулса тухрĕ тĕк манăн ыраша та авăртса кĕртсе хăваран, эпĕ киле кайрăм, — тет Михала.

— Эсĕ ытла ан васка-ха, улăха анса шăрчăк пуçтар, унпа пулă питĕ лайăх кĕрекенччĕ, — хушать куккăшне Ванюк пичче, вăлта майлакаланă май.

Чăнах та, те кунĕ питĕ лайăх пулнипе, те пулли йышлипе, Ванюк пичче кĕске вăхăтрах пĕр витре ал тупанĕ тăршшĕ партассем тытса килет. Пурте тĕлĕнеççĕ пулăçран.

— Часрах пулă шӳрпи туса çиес, — чĕвĕлтетеççĕ Вутлан хĕрарăмĕсем.

Нумай та вăхăт иртмест Шетмĕ хĕрринчи хăвалăхра вырнаçнă вучахра хуранти шыв сиксе вĕреме пуçлать. Ванюк пичче унта пуллине чăмтарать.

— Партассен куҫӗсем шуралчӗҫ, пиҫрӗҫ ӗнтӗ вӗсем, — васкаҫҫӗ хырӑмӗ хыр тӑрне кайнӑ хӗрарӑмсем, хуран умӗнче тапӑртатса тӑраканскерсем.

— Апла пулсан парӑр чашӑкусене, — кӑмӑллӑн хушать вӗсене Ванюк пичче.

Хӗрарӑмсем пуҫлаҫҫӗ пулӑ шӳрпине ҫиме, кашӑк шакӑртатни ҫеҫ илтӗнет. Ах мухтаҫҫӗ пулӑҫа! Ах мухтаҫҫӗ! Ванюк пичче хуран айне ҫаплах вутӑ хурать-ха, шӳрпи сиксе вӗрет. Пулӑ ирӗлсех каять. Хӗрарӑмсем ҫисе тӑрансан хӑвалӑхри сӗтел хушшине Ванюк пичче, Михала куккӑшӗ, Макҫӑм арманҫӑ ларaҫҫӗ. Ах мухтаҫҫӗ кусем те пулӑҫа.

— Маттур, — теҫҫӗ Ванюк пиччене.

Тепӗр ҫур сехетрен хӗрарӑмсене тем пулать, пуҫлаҫҫӗ вӗсем хырӑмӗсене тытса аякри хӑвалӑха чупма. Тухаҫҫӗ ҫеҫ унтан, вун-вуникӗ утас тӑваҫҫӗ те каллех каялла кӗрсе каяҫҫӗ. Варӗсене тем амакӗ лекнӗ тейӗн. Арҫынсене ним те пулман. Ҫиессе те вӗсем пӗр хуранранах ҫирӗҫ-ҫке, иҫмасса.

Армана тырӑ яраканни никам та ҫук. Мӗн тумалла?

— Пуҫла хӑвӑнне авӑртма, — хушать Ванюк пиччене Макҫӑм мучи.

Ванюк пичче те, Михала куккӑшӗ те тырра авӑртса пӗтереҫҫӗ. Хӗрарӑмсем хӑвалӑхран ниепле те тухаймаҫҫӗ. Варвиттине ернипе.



Çапла вара Ванюк пиччепе Михала куккăшĕ каçчен арман авăртса таврăнаççĕ.

— Ара мĕн ятăн эсĕ хурана, мĕн пулчĕ вутлансене, — ыйтать Ванюкран куккăшĕ.

— Ним те тумарăм-çке. Хăвăр та куртăр вĕт, пурте юнашарах пултăр манпа, — хуравлать кĕçĕнни аслине. Хăйне темле ĕçтерсе ўсĕртсен те Ванюк пичче вăрттăнлăхне нумай çул упраса пурăнать. Михала куккăшĕ вăрттăнлăха уçать уçатех.

Тупсăмĕ вара питĕ ансат. Чĕрĕ пулла пĕçернĕ чух какайран ытларах вĕретмелле иккен.

Пулă çиес ĕмĕтпе хавхаланнă хĕрарăмсем ун чухне пулăсене лайăх вĕретмесĕрех çиме пуçланă. Çавăнпа варвиттине кайнă. Ванюк пичче каланă тăрăх унăн аслашшĕсем ку меслетпе арманта час-часах усă курнă-мĕн.

## ТУЙ ЯШКИ

Сăпалюк кинемин Нинукĕ качча кайнă кун Пăлаки аппана туй халăхĕ валли шўрпе пĕçерме шаннă. Ăна пулăшма Ванюк пиччене хушнă. Вăйпитти арçынăн хăнисене тивĕçтерекен апат пĕçерме, чăнах та, нумай тар юхтарма тивнĕ. Вуникĕ витре кĕрекен хурана çырмари çăлран шыв кўрсе тултармалла пулнă. Вутти-шанки тата! Малтан ăна тупмалла, кайран татса çурмалла. Аллăмĕш çулсенче пирĕн тăрăхра вутă тупасси çăмăл япала пулман. Нумайăшĕ хĕлле те улăмпа кăмака хутнă. Çавна шута илсе ĕнтĕ пултаруллă та тавçăруллă Ванюк пиччене шанса панă ку ĕçе.

Лаç хуçи вуттине те вăхăтра тупнă, шывне те кая юлмасăр кўрсе килнĕ.

Пăлаки аппа та аллине усса ларман. Ик-виçĕ витре çĕрулми шуратнă, пĕр чашăк суханпа ыхра таснă. Туй валли ятарласа пуснă такине майланă, ўпке-пĕверне, какайне вакланă, пуçне тата урисене

ĕнтсе-çуса хурана чăмтарнă, Типĕ вутă ялкăшса çуннă. Хуран сиксе вĕренĕ. Шӳрпене тăварлама вăхăт çитнĕ.

— Ванюк шăллăм, тăвар илсе кил-ха, — хушнă хăйне пулăшакана Пăлаки аппа.

— Çиччас, — тенĕ Ванюк пичче.

Нумай та вăхăт иртмен. Ванюк пичче лаçа пырса çитнĕ. Тăвар банкипе пĕрле çур четвĕрт аншарли йăтса пынă. Пăлаки аппапа иккĕшĕ пĕрер курка сăмакун ӳпĕнтерсен, Ванюк пичче ăшĕнче лĕх-лĕх кулса, лаçран тухса утнă.

Шӳрпе поварĕ пуçланă хурана тăвар яма. Виçĕ литр банкăри тăвара пĕр çăпала тултарнă та вĕре-кен шӳрпене чăмтарнă. Çав çăпалипех шӳрпене тутанса пăхнă. Анчах вăл пĕр пĕрчĕ тăвар лекмен пекех тăварсăр пулнă.

— Ай, хуранĕ пысăк-çке, — мăкăртатнă Пăлаки аппа, — пĕр çăпала тăвар ним те мар ăна.

Ун хыççăн тата тепĕр çăпала чăмтарнă вăл хура-на банкăри тăвара. Каллех сыпса пăхнă, анчах тăварĕ çаплах пĕр чĕптĕм те витмен.

— Эй тур-тур, мĕнле тăвар пулчĕ вара ку! — тĕлĕннĕ ӳсĕрĕлсе кайнă Пăлаки аппа, хурана тепĕр çăпала тăвар пăтратса.

— Ну, мĕнле ĕçсем, Пăлаки аппа, — тăварла-рăн-и шӳрпене! — ыйтнă тепĕртакран лаçа вутă çĕклемĕ йăтса пынă Ванюк пичче.

— Тăварне темиçе çăпала та ятăм ĕнтĕ, анчах темле слабăй тăвар пулчĕ, никак каламаç та кала-маç, — хуравлать ӳсĕрĕлсе кайнă Пăлаки аппа, пушанса юлнă банка çине пӳрнипе тĕллесе.

— «Экстра» текен çĕн тăвар вăл, куратни шап-шурă, — каллех кулать хăй ăшĕнче Ванюк пичче.

Чăнах та, вăл вăхăтра лавккана шултра та кăвак тĕс çапнă тăвар вырăнне вĕтĕ та шап-шурă тăвар илсе килме пуçларĕç. Сахăр песукĕнчен, тутанса пăхмасăр, уйăрса илме те çук.

Часах шӳрпе çиме вăхăт çитет. Пĕри кашăк сы-пать, тепри тепĕр кашăк сыпать туй шӳрпине, анчах

вăл пыл шерпечĕ пек пылак. Пуçлаççĕ кĕрекери хăнасем шавлама, кайран кулма... Туй халăхĕ ку пăтăрмах Ванюк пиччен черетлĕ шӳчĕ пулнине ăнланать. Чăнах та, вăл шӳт туса чăлантан лаçа тăвар савăчĕ вырăнне сахăр песукĕ тултарнă банкăна йăтса пынă. Усĕрĕлсе кайнă Пăлаки аппа ăна ăнкарайман.

## ПĔРРЕ ВЫРĂННЕ — ВУНИККĔ

Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче Çĕрпӳрен пилĕк çулхи Ленькка ашшĕ-амăшĕпе кукамăшĕ патне яла пынă. Çĕрулми лартмалли вăхăт пулнă.

Ирхине Сăпалюк кинеми пахчине кӳршисем çĕрулми лартма пухăннă, Ванюк пичче те кунтах. Пускилсен пĕр-пĕрне пулăшасси — авалтанхи йăла. Кĕтӳ янă чух кам та пулин «паян çĕрулми лартас тетпĕр-ха» тесе анчах каланă — пахчана халăх пухăннă та. Хăш-хăш чух çынсем çĕрулми пăрахнă çĕре икшер утăмрах тăнă. Çăкăр-тăвар хире-хирĕçех вĕт. Енчен те эсĕ кӳршĕ патне çĕрулми лартма каятăн-тăк, ху лартнă чух вĕсем те сана пулăшма пыраççĕ.

Ку хутĕнче ача-пăчапа та юптарса калаçма пĕлекен Ванюк пичче çумĕнче Ленькка тăрăшать. Аслисенчен кая юлмасăрах çĕрулмине пăрахса пырать вăл. Ĕçленĕ май, Ванюк пичче Ленькăн уринче çĕнĕ хура пушмака курах каять. Шӳтлеме юратакансскерĕн пуçне шухă шухăш пырса кĕрет.

— Халĕ сана пĕчченех пăрахатăп, кĕркунне эс вуникĕ çĕрулми парăн, — тесе калаçма пуçлать вăл, кашни çĕрулми касăкне сухапуç чĕрсе кайнă йăрана меллĕн вырнаçтарса.

— Ленькка санăн кĕркунне пĕр пушмак вырăнне вуникĕ пушмак тупас килет-и? — ыйтать Ванюк пичче шĕвĕрккерен.

— Килет, паллах, Ванюк тете, — килĕшет Ленькка.

— Апла пулсан, хыв пушмакна, Михаил мучи сухапуçпе килсе çитиччен çĕрулми выранне пăрах ăна, — хушать Ванюк пичче Леньккăна.

Лешĕ пушмакне йăпăр-япăр хывать те йăрана пăрахать. Хушнă пек, тăпрапа лайăх витсе хурать.

Çĕрулми лартса пĕтерсен, халăх саланать. Ленькка та килне кĕрет. Кукамăшĕ Леньккăн уринче хăрах пушмакĕ çуккине асăрхать те:

— Ленькка, санăн тепĕр пушмак ăçта? — ыйтать вăл мăнукĕнчен.

— Эпĕ ăна пахчара лартса хăвартăм, — мăнаçлăн хуравлать Ленькка. — Кĕркунне вуникĕ пушмак кăларса илетĕп...



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Измаил ГРИГОРЬЕВ-ИСЕМПЕК

ВАНЮК ПИЧЧЕ МЫСКАРИСЕМ

калавсем

Редактор Л. В. Смолина
Художник Л. Я. Павлов
Тех. редактор О. А. Алексеев
Набора 25.10.99 панă. Пичете 02.11.99 алă пуснă.
Хут формачĕ 84x54. Заказ К-1816. Тираж 497 экз.
428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13.